33412

леон. пушкай
ив. вашки
ал. каттай
иван малгай
хвет. ҫитта

# малтанхи парне

сăвăсен пуххи



чăвашиздат
шупашкар — 1933

леон. пушкай
ив. вашки
ал. каттай
иван малгай
хвет. çитта

# малтанхи парне

сăвăсен пуххи

чăвашиздат
шупашкар — 1933

Редактор **Н. Шубоссынни.**
Техн. редактор **Нестэр Янгас.**

Чувашлит № 1729. Чувашгиз № 190.
Индекс X—2. Тираж 3000 экз.
Об'ем $1^{3}/_{8}$ печ. л. Формат бум. 82/110/64.
Кол. зн. в печ. л. 62.720.

Сдано в набор 19/X—33 г.
Подписано к печати 21/X—33 г.

Типогр. Чувашгиза № 2 в г. Алатыре, ЧАССР. Зак. № 2551.

Чăваш пионер организаци
10 çул тултарнине хисеплесе
парнелетпĕр.

Автăрсем.

## Умсӑмах.

Чӑваш совет писатӗлӗсен сойузӗн Оргкомитечӗ кӑҫалхи августӑн 10-мӗшӗнче чӑваш писатӗлӗсемпе пионерсене, педагогсене, библиотекӑрсене ача-пӑча литературине тума чӗнсе пысӑк ҫыру кӑларчӗ. Вӑл ҫырура: „Комунисла воҫпитани ӗҫӗнчи пысӑк задачсене ӗҫе кӗртмешкӗн пире паха, чӑн та илемлӗ ача-пӑча литературӗ кирлӗ. Вӑл литература „ҫара" литературӑшӑн мар, ачасене ӳссе пынӑ ҫӗрте социалисӑм тӑвас ӗҫре ҫыпӑҫтарса тӑракан, строитӗлствӑ ӗҫӗшӗн кӗрешекен, ачасен творчӗстви ӗҫне ҫитӗнтерекен, активлӑха хӑпартакан, вӗсен опӑтне пуйанлатса материалисӑмлӑ мировозренине ӳсгерекен литературӑ кирлӗ", тесе ҫырнӑ.

Ача-пӑча литературине тумашкӑн Максим Горйки ҫине тӑрсах писатӗлсене, психолог профессӑрӗсене, педагог профессӑрӗсене тата ытти ӑслӑлӑх

тĕлĕшпе ĕçлекенсене те хĕтĕртсе пысăк чĕну тунăччĕ. Воçпитани ĕçĕнче ачапăча кăмăлне кайнакан, ăна ăнланма çăмăл та хитре чĕлхепе çырнă произведени пит те кирлĕ, вăл чăн-чăн малала пурнăç тума пулăшакан емел пулса тăраť. Комунисла воçпитанире ĕçе хавасланн йурăсемпе сăвăлани, класлă кĕрешĕвре ĕççынниме хирĕç тăракан тăшмана (кулака) пĕлмешкĕн унпа çапăçма пур чухне те хатĕр пулма чĕнни, хулапа йал уйрăмлăхне пĕтерме вĕрентни — чăн хаљхи саманари мотивсем, вĕсем етем ăрăвне классăр обчĕствă тума пулăшакан кĕвĕсем пулса тăраççĕ.

Çакăнта çапăнакан сăвăсем çамрăк, халĕ нумай пулмасť çырма пуçлавă чăваш поечĕсен сăввисем. Вĕсем кăштах пĕр майлăрах, пĕрне-пĕри пăхса çырнă пек курăнаççĕ пулин те, епĕр ку кансĕрлĕхе инкек вырăннех хумастпăр. Çитĕннĕ май вĕсем комуниссен партипе комсомол йертсе пынипе пĕчĕккĕнех йакалса пырĕç, кашни поет хăй çулне хăй тупса, хăй тимлĕ.

Ку сăвăсене çăмăл чĕлхепе çырнă, сăмахсене хуçса хăш „чаплă“ поетсем пек муталаса вырăсла „агăлчанла“

сӑмахсемпе рифмӑламан. Ҫав вӑхӑтрах социализм вӑхӑтӗнчи задачсене маркҫисла ӑнланнине те кӑтартнӑ. Ку ӗнтӗ кӗнекен пит те паха йенӗ. Ҫапах та ку кӗнекене пит те тарӑн сӑнлӑхлӑ, чӗререн тухнӑ сӑвӑсемпе ерешлесе ҫитернӗ теме пултараймастпӑр; кунта декларативлӑ ритторикӑ та сахал мар.

Анчах ку „Малтанхи парне“, ҫавӑнпа питех хытӑ тиркесе тӑмӑпӑр. Кӑна ҫырнӑ ҫамрӑк поэтсем: хӑшӗсем вӗсенчен беспризорниксем пулса ӳснӗ, вӗсем ҫамрӑклах тӗвче йӳҫҫине, пурнӑҫӑн хура шуррине тӳссе курнӑ. Ҫапах та ку сборникре вӑйкӑшни, пурнӑҫа ӳпкелешни йе сӗт ӗмекен пӑру пек тӗнче илемлӗхӗпе хавасланни (телячий восторг)—ҫук.

Еҫе мухтани, шкулта вӗренме ачасене чӗнсе хӗтӗртни, лагерти дисциплинӑшӗн тӑрӑшни, физкультурӑна сывлӑхшӑн ҫӳлеле хӑпартни, класлӑ тӑшмана таптама чӗнни—ҫак сборникри сӑвӑсен тӗп кӗвви.

**Н. Шубоҫҫынни.**

# ЛЕОН. ПУШКАЙ

## Кĕрешӳ сасси.

Йурлам пайан,
Йурлам тăвăл саспа,
Пуçри хĕлхемлĕ шухăш,
Çавна сис те, —
Выља, хĕлхем!
Пуç миминче аслан та,
Ман шухăшăм,
Ракет пек, вичкĕн,
Çӳлĕ, çӳлĕ хăпарса,
Ирхи шевле пек,
Вутлăн çиçĕн!

Выља, хĕлхем!..
Выља пуç миминче
Сăмах тĕрри пулса
Йĕр пуличчен.
Шухăш ас та[1],
Хулăм саспа
Йухăн хурçă кĕввинчен.

---

[1] Аслăлан та.

* * *

Ĕçпе вĕрет хула.
Çĕнĕ йăла — йала!
Ĕç хĕмленет
Çил-тăвăл майлă.
Кар! çавăрнать,
Машинă улать:
Пиртен тĕп пултăр! — тет, —
Найанлăх!
Ей, çил, ула!
Йăмшаклăха тулла,
Еп те хушапвăйа,
Еп те санпа йалан.

Тăвăл мана йышнать,
Мана хушать йыша.
Ей, çил, пĕрле! —
Еп те санпа пĕрле!

Чĕрем ман хурçă,
Кăкăр çирĕп,
Ут-тир чухеннĕ тарпала.
Пĕрлешуре калатăп:
— Сирĕл умран, пĕчченлĕх,
Тăпралан!

Еп пĕччен мар,
Ман йыш — КИМ çарĕ,

Ман йыш — ударникле хӑват.
Вӑл мул тӗнчин
Сӑртне куҫарчӗ,
Пайан
Ҫӗн никӗсе хыват.

Ҫӗн никӗсе бетон хывса
Йанкар пӗлӗте ӳссе
Ҫитетпӗр.
Еҫ хӗмӗпе хавхаланса
Гранит чулне
Алла илетпӗр.

Вӗренӳре,
Ӗҫре хастаррӑн,
Амӑртулӑ фронтра
Хастар епир.
Хӗрӳ ӗҫрен
Йепле-ха тарӑн?
Ӗшентермест ҫӗнелнӗ хир.

Ей, комсомол!
Ес манӑн йышӑм,
Ес манӑн ҫул, —
Ес ман хӗвел.
Сан хыҫҫӑн епӗр мӗлйунӑн,
Мӗлйунпа ӗҫре хӗрер!..

## Пионерла салам!

**Чăваш пионер организацин 10 çуллăх йачĕпе.**

Йем-йешĕл
Симĕс халатне
Вăрман хывасшăн
Йăпăр-йапăр.
Пайан ак
Шкулăн алăкне
Йар уçрĕ те
Ирхи çентабĕр.

Ĕнер кăна
— Хиртен шкула!
Пур çамрăк сасă пачĕ.
— Атăр!
Йешĕл хаваслăх
Йăл кулат,
Питсем калаççĕ,—
— Хатĕр!

Пиртен
Ак йулчĕ тăлăха,
Вăрман,
Атăл,
çаран.
Савса, вĕт,

Симĕс улăха,
Чупса йӳле-çарран.

Савса та кăмăл уйхире,
Савса колхозăн уй ĕçне.
Ĕçре ман вăй çирĕп ĕçлет,
Ах, йурă
Инçене вĕçет.

Çӳлте хĕвелĕ тĕрмешет,
Хĕвел пек, пирĕн
Ĕç палли.
Çамрăка ĕç килĕшет —
Самрăк патăр
Ĕç алли.

Умра ĕçлет ĕçчен çемйе.
Ĕçлет хĕрӳлĕн,
Ăмăртатӑ...
Ах, çамрăк,
Шкулран ăс-тăн пухса,
Мала, мала
Хăйне туртатӑ.

Салам сире,
Ман тантăшсем!
Пионерла салам!
Вун çулăн хĕрлĕ йачĕпе

Телейлĕх еп
Сунап.

Йулташăм пултăр —
Кĕнеке,
Тантăш — ĕçри
Ертел.
Сыв пултăр ăслăлăх
Йĕрки,
Сыв пултăр
Кĕнеке!

●

## Ей, ут, бригадă!..

Анне! пăх-ха, йепле
Илемлĕ!
Йепле утаççĕ çамрăксем...
Йалав вĕçет,
Йалав хĕлхемлĕ...
Чăн-чăн çĕн пурнăç калчисем.

Умра шавлать
Ав, хурçă трактăр,
Шавлать çĕн пурнăç вучаххи...
Хĕрӳ ĕçре
Вăл пирĕн паттăр,
Вăл çĕнĕ пурнăç йапали.

Хĕрсе çĕн пурнăç
Халĕ тăватпăр,
Вăй пирĕн çамрăк хушшинче.
Хĕрӳ ĕçре епĕр çунатпăр,
Пулас çĕн пурнăç вуттинче.

Ĕçе ĕçлетпĕр
Халĕ бригадăн,
Тĕнче тăватпăр хурçăран.
Ей! ут, бригадă! кассăн-кассăн
Хĕлхем йалкăштăр пурнăçран.

Анне! пăх-ха,
Йепле илемлĕ!
Йепле утаççĕ çамрăксем...
Йалав вĕçет,
Йалав хĕлхемлĕ,
Ĕçре бригадă ачисем.

* *
*

Çак тапхăр вăл —
Хĕрӳлĕ тапхăр,
Епир ударлăха уçса,
Ĕçрен найанлăха таптатпăр.
Çĕн кун телейлĕх илемне
Мĕн пур вăйхалăм
Илленет.

Çак çамрăк харсăр
Çемйере
Чĕрем ĕçре ман
Килленет.

Хаваслă ĕмĕр — çамрăклăх,
Телейлĕ пурнăç çамрăкра.
Йĕри-тавра ман
Тантăшăм —
Ударлă стройкăра.
Вăйхал ĕçре тем
Анлăшĕн
Ĕçченлĕхе карать.

Хулара та, уйхир те
Ман çамрăк йышăм
Вĕренет.
Шкулран ăс аслă
Пирĕнте,
Пирте пĕлӳлĕх
Йешерет...

Пушă вăхăт —
Йĕлтĕрпе...
Сывлăш, аслăн
Вĕлтĕртет!..
Кăкăр уçă сывлăша
Чӳхесе илет ăша.

Ех, йарнас,
Йарнас килет,
Çамрак пӳ
Хăват илет...
Кăкăр уçă сывлăша,
Чӳхесе илет ăша.

Пурнăç çулĕ сарлака,
Ман ĕçлес, пурнас килет.
Ех, кунçулăм, сарлакан
Йăсланса хăват илет...
Пурнăç çулĕ — йап-йака,
Пурнăç çулĕ — çĕн телей!

* *
*

Çак тапхăр вăл —
Хĕрӳлĕ тапхăр.
Епир ударлăха уçса,
Ĕçрен йăмшаклăха
Таптатпăр.
Çĕн кун телейлĕх илемне
Мĕн пур вăйхалăм илленет.
Çак çамрăк харсăр
Çемйере
Чĕрем ĕçрех ман
Килленет.

## Республик ирӗ.

Тӑп-тӑрӑ ир.
Хӗвел хӗп-хӗрлӗн те
Илемлӗн
Пӗлӗт ҫине каранӑ
Кӗрен чаршав.
Тӑван республикӗм
Пӗр меллӗн
Ҫак ир паранӑ ударлӑн
Чӗрӗ шав.

Еп кашнӑ ир
Тухатӑп,
Тинкереп:
Республике куратӑп
Пур йенчен.
Ирхи гудок
Ударлӑн ӗрӗхет,
Ирхи гудок
Ӑмӑртӑва чӗнет.

Йешӗл вӑрмансене
Ҫурса
Кӗрлет
Дубитӗл, Ҫӗмӗрле—
Пайан, республикӗм,
Пур сан.

Хĕрӳ ĕçпе ударлăн
Вăй кĕрлет.

Вăрнар
Хирет çĕре тĕпрен,
Тĕпрен илетпĕр
Фосфорит.
Пуйанлăх хамăрăн тĕпре,
Пуйанлăх пирĕншĕн вĕри.

Шупка ире
Тĕтре-тĕтре
Ĕçе тухать
Канаш, Урмар...
Хурçă утсем
Çеçен хире
Йараççĕ хурçăран
Тымар.

Лере
Улатăр,
Куславка...
Ĕхрет те пуйăс —
Çĕн телей.
Çӳле çĕклентĕр
Семафор!..
Пайан республик
Çĕнтерет.

Еп кашнă ир
Тухатăп,
Тинкереп:
Республике куратăп
Пур йенчен.
Ирхи гудок
Ударлăн ĕрĕхсен —
Пин çарлă йыш
Ĕçе кĕрет.

Йăхрать гудок.
Республик ĕрĕхет...
Тавралăх — хурçăлă уйхир.
Пайан
Республик çĕнтерет,
Пайан социалисăмлă ир.

●

## Мучийе.

Тухăç[1] илемлĕн,
Сĕт йевĕр, шап-шуррăн,
Ирĕккĕн уçрĕ
Шупка чаршавне.
Сивĕ те сулхăн шывпа
Пите çурăм,

---

[1] Хĕвелтухăç.

Тухрăм та чупрăм
Хирти анкартне.

Шăп ирхи йалăн
Çырма леш йеннийĕ.
Авăтрĕ автанĕ
Çапса çунатне.
Çук, савăймарĕ мана
Ун сассийĕ,
Саврĕ манăн кăмăл
Машин сассине.

Тӳлек ир çанталăк.
Таçтан айакран çеç,
Такам чутланă
Сасă илтĕнет.
Ир çула тухнă
Пĕччен çын — çуранçă—
Лаша чуппине тинкерсе
Тем итлет...

Чарăн, мучийĕм,
Ăçта ес сĕнкетĕн?
Камран йăлăнма ес
Тухса хутаçпа?
Çитĕ сана,
Вăхăт мар,
Еп сĕнетĕп

Çак пусмăр урлă
Каçма.

Ав, йĕтемре
Тулхăрать
Хурçă сасă.
Машин ĕрĕхет
Кĕлтене çавăрса...
Мучи!
Пĕрлешсе пурăнсассăн,
Çĕн пурнăç йухать
Çаврăнса.

Пуласлăх кунçулăн
Телейлĕ çут ирĕ,
Мĕн пур пусмăртан
Хăтаран
Çĕн телей,
Вăл пирĕн колхозăн
Çĕнтерÿлĕ хирĕ,
Мучи!
Васкарах утмала
Çав тĕле.

Илтетни, мучийĕм!
Мотор хурçă саслăн
Пире хăй патне вăл
Ĕçе йăхăрать.

Пурнăç — ертел,
Пĕрлешÿлĕ пулсассăн,
Ĕмĕр нушийĕ
Хăрать.

Çитĕ сана,
Вăхăт мар,
Еп сĕнетĕп:
Пăрах çак нуша хутаçне,
Парахмалах.
Пайан колхоз мар-тăк,
Ыран ес кĕретĕн,
Ыран пурнăçу колхоза
Савмалах.

●

## Май уйавĕнче.

Мĕн-ма чĕрем
Сикет пайан?
Мăн-ма ман шухăш аслă?
Чĕлхем выљать
Май кунĕшĕн.
Тулта мĕнпек хаваслăх!

Ăш çилĕпе
Вĕл-вĕл вĕçет
Йĕпкĕн хăмач йалавĕ.

Пайан вăйхалсене
Виçет
Çĕнтерӳ уйавĕ.

Ĕç çынĕпе
Урам тулса,
Шав тинĕс пек, йăлт хумлă.
Камах пӳртре
Чăтса ларса,
Камах-ши халĕ йулнă?

Лерен иртеç
Йурла-йурла
Ав, çамрăксем тем чухлĕ.
Етемлĕх хумĕ
Туртăнаť —
Çĕнтерӳлĕ ушкăн.

Вĕçрен хаваслă
Йурăсем,
Вĕçрен йанраť „урра"...
Вăрман ăна
Инçет туса,
Инçе кайса хураť.

Хавас-хавас
Çиçет кунçул,
Уйав пайан, уйав.

Ниçта пӑхсан
Салхулӑх çук,
Чӗрем хавас туйӑт.

Еп те пайан
Хӗвел пулам—
Çунам вутра хаваслӑн.
Йӗс хӗлӗхе
Алла тытам,
Шӑрантӑр йуррӑм аслӑн.

Пуçри хӗлхем
Вут хӗм пулса,
Аçа пек, вутлӑн çиçтӗр.
Ман йуррӑмçӑм
Ӗçпе тулса,
Йӑмшаклӑх витӗр иштӗр.

## Пионери, мала!

**Марш.**

Пӑтти-патти барабанӗ...
Ирӗк çулпала,
Марш, Октябӗр чечеккисем,
Ӗç патне, мала!
    Ӗçшӗн харсӑр епӗр—
    Ӗçлӗ тапхӑрта.

Киввине ĕнтетпĕр!
Тап ăна, — хăртах!
Кам ĕçрен пăрнасшăн халĕ,
Кам йулхав етем,—
Çап ăна, ударник алĕ,
Еçпеле хĕртсе!
Ĕçшĕн харсăр епĕр—
Ĕçлĕ тапхăрта!
Киввине ĕнтетпĕр,
Тап ăна, — хăртах!
Ĕмĕт аслă — ĕç чĕрийĕ.
Шухăшăм — хĕвел.
Ĕç — анне, атемĕр — ирĕк.
Йултăшăм — ертел.
Ĕçшĕн харсăр епĕр —
Ĕçлĕ тапхăрта.
Киввине ĕнтетпĕр,
Тап ăна, — хăртах!
Пирĕн çар ĕçре ударлă,
Ăмăртса ĕçлет.
Кам тăшман, ăна хайаррăн
Вăйхалпа ишет.
Ĕçшĕн харсăр епĕр —
Ĕçлĕ тапхăрта.
Çĕнтерсе илетпĕр
Пурнăçа малтан.
Ӳс, ертел, ĕçпе тивлетлĕн
Пар вăйна ĕçех...

Марш, çемйем, ĕçе ертеллĕн,
Тыт алла ĕçех!
Ĕçшĕн харсăр епĕр —
Ĕçлĕ тапхăрта.
Киввине ĕнтетпĕр,
Тап ăна, — хăртах!

●

## Йалта.

Кантăк çийĕн
Йарăм-йарăмăн пилеш
Усăнса тăраť
Кĕрен шăрçайăн.
Килтĕм еп пайан
Тăван киле
Çĕнĕ шухăш,
Çĕнĕ ĕмĕт айĕн.
Сакăр çул пулман
Тăван йалта,
Пĕчĕкрен еп
Хулара вĕрентĕм.
Йала кĕтĕм —
Куçăм чи малтан
Шур чиркӳ çине
Пăхса тинкерчĕ.
Ку чиркӳ
Çавах-ши? — теп, пăхап,

Тăррине такам сӳсе
Антарнă.
Тĕлĕнетĕп:
— „Ех, тур çырлахах!“ —
Ку йалтан турри мĕн
Тухса тарнă?!
Кĕпĕрленсе тухрĕç
Чиркӳрен
Хĕрлĕ мăйлă çамрăксем
Хаваслăн.
Еп пăхса тăрап,
Савăннипе:
— Ку чиркӳ мĕскер? тесе
Ыйтасшăн.
Ăнланайрăм
Тинкерсе тăрсан, —
Чиркӳрен шкул тунă
Иккенне.
Çук туррисене
Тӳнтерсе йарса,
Йалăм çĕнĕленнĕ
Тĕпренех...
Леререх ав,
Пысăк çурт колхозăн,
Тăртăнса ларать
Мăн елеватăр.
Кĕтеспе шавла-шавла
Иртет ав,

Хурçă саслă
Çĕнтерÿлĕ трактăр
Пÿрте кĕтĕм.
Ват аннем кăна,
Сар сĕтел çумне
Шăлăмпа ларнă.
Хĕрлĕ măйлă
Шăлăмăм ăна
Сарă çиллĕ
Кĕнеке тыттарнă.
Ват аннем
Йăваш сассипеле,
Шăп, хуллен—
К-о-л-х-о-з, тесе вуларĕ.
Кăмăл тулчĕ,
Савăннипеле
Шăлăма пырса еп
Ыталарăм.
Тăван йалăм,
Çĕнĕленнĕ ман,
Кĕтесре турри те çук,
Куратăп.
Ват аннем
Вĕреннĕ вулама,
Ват аннем
Ăслăх ĕçне куçасшăн.

## Уйхир — вучах.

**Патёрйелёнчи „Ленин çулёпе" колхозри комсомолкă-ударницăсене.**

Кăвак пёлёт çутă, тарăн,
Çут хёвел унта çиçет.
Савăнса йурра йухтарăн
Çак хаваслă уйхирте.
Ой, уйхир, ес ылтăн тивёс —
Вёçсёр, вёçсёр хум авчах.
Шерепелён хумхан чилё
Кунти тырăлă пучах.
Ах, хёвелё, шăрăх-шăрăх,
Те кулсах хёртет хёвел?..
Хăйён ылтăн пичё тăрăх
Йёппипе илсе перет.
Ан выља, хёвел, ан ашкăн,
Пучахпа илсе переп...
Сар хёвелё выљамашкăн
Чарăнмасť, хёртет-хёртет...
Умăмра колхоз уйхирё,
Вёçсёр тырăлă инçет..
Чăнкăрр... чăнк! машин сассийё,
Жнейкă тырăна виçет.
Хёрёсем кунта, хёвел пек,
Пичёсем кёрен çырла.
Кăмăла туртса кёвёлёç,
Хушăç йуррăма çырма.

Комсомолкă, савнă Клавтă,
Ак, Лисукăм, ăмăртар!
Уйхиртен тырра пухар та,
Совета часрах парар.
Çак кунçулăн çулĕ анлă,
Кĕрешмесĕр илес çук.
Пурнăçа çĕнсе йусас-тăк,
Кирлĕ: тырă, ĕç кăчух.
Хулана парар та тырă,
А, хула, ес пар машин.
Пĕрлешсе ĕçе тухар та,
Ăмăртса ĕçлер кашни.

* * *

Уйхирпе пыратăп,
Йешĕл сукмакпа.
Таврана пăхатăп
Тинкерсе куçпа.

Умри çеçен хирĕ —
Колхозсен ани.
Кунта кашни ирĕк
Халь ĕçрех, кашни.

Ертеленнĕ халăх
Кунта пит ĕçчен.
Сирĕлтĕр аваллăх
Ку йăх умĕнчен!

Кунта, вӗт, кашнийӗ,
Кур, — ӗçпех ӗҫрет...
Пӑхӑр, ав, машинӗ
Кӗрлесе иртет...

Ну, йепле чӑтам-ха
Кунта еп пайан?..
Йуррӑма тӑсам-ха
Хир тавра йан-йан!

Манпалах сӗрлетӗр
Тӑри тӳпере.
Вирлӗрех çӗклентӗр
Ман çамрӑк чӗрем!

●

*
* *

Хӗвел хытӑ хӗртнӗ май
Ирӗлет шур йурӗ.
Кайӑк-кӗшӗксем пӗрмай
Йухтараç çӗн йурӑ.

Çамрӑк Петӗкӑ урама
Тухрӗ пит хӑйулӑн.
Илтрӗ — кайӑк йуррине —
Шӑратать салхулӑн.

— Петӗр, Петӗр, Петӗркке,
Вӗле ту-ха, — терӗ.

Петкă ăна хĕрхенсе:
— Тăвăп, тăвăп, — терĕ.

Пĕр самантрах васкаса
Çамрăксем пухăнчĕç.
Пĕрне-пĕри пулăшса
Ĕçлеме тытăнчĕç...

Ех! пуçланчĕ ăмăрту —
Çăт-çат-çат! — çеç сасă.
Ей! ес, Петкă, хăвăрт ту,
Пултăр ĕç ударлă...

. . . . . . . . . . . . . .

Ак ачасем хавасла
Йăл-йăл-йăл... кулаççĕ.
Пиук-пиук! — кайăксем
Йурă йухтараççĕ...

●

## Епĕр ĕçре харсăр...

Йанкăр-йанкăр тăрă пĕлĕт
Ăшшăн кăвакарчĕ...
Çурхи лăпкă, ăшă куншăн
Хĕвел кулса йачĕ.

Шăлтăр-шăлтăр... çĕнĕ трийĕр
Хăй ĕçне тапратрĕ.

— Ей, ачасем, тырă тиййр,
Имçама тасатăр!

Нукка, Петкă, ăмăртатпăр,
Хытăрах çаврар-ха!
Тĕшĕ тырă йухтаратпăр,
Тыррине тултар-ха.

Пирĕн çамрăк çар ударлă,
Епĕр ывăнмастпăр.
Ут-пўсем йалт хура тарлă,
Ĕçре пит те харсăр.

*
* *

Колхоз хирĕ сарлака,
Шултра тыр пĕрчийĕ..
Лăпкă çилĕ вăшлатсан,
Пуç тайат ун çийĕ.

Ав, лере йепле шăват,
Пăх-ха, пăх, машинă...
Халь ăна уйхир парнат,
Касăлат ун çийĕ.

Кунти харсăр ĕçлĕ çар
Лагĕртен, вĕт, килнĕ.
Пĕр хаваслăн ĕçе кар
Тăрса йĕркеленнĕ.

Шкулра ларнӑ хут ҫинче,
Хаҗ ӗҫре туптатпӑр.
Амӑртулӑ ӗҫ ҫинче
Ӗҫе сӑвӑлатпӑр.

●

## Пионерсен маршӗ.

**Йурӑ.**

Урам тӑрӑх йурласа
Пионерсем пыраҫҫӗ,
Ех, пыраҫҫӗ.
Пӗр-пӗринчен иртмеҫҫӗ,
Пӗрне-пӗри хистеҫҫӗ,
Ертелпеле утаҫҫӗ.

Епӗр ҫамрӑк ҫеҫкесем,
Ҫӗнӗ пурнӑҫ ҫеҫкисем,
Ех, ҫеҫкисем.
Уҫӑ, таса сывлӑшра
Вӑй выҗатпӑр йурласа,
Вӑй выҗатпӑр йурласа.

Епӗр йышпа ӳснӗ чух,
Тӑшман пире курӑнсан,
Ех, курӑнсан,—
Епӗр хатӗр ертелпе
Хирӗҫ тухса пӗтерме,
Хирӗҫ тухса пӗтерме.

Вĕренетпĕр ĕçпеле.
Хĕмленет вăйхал ӳтре,
Вăйхал ӳтре.
Вăй илетпĕр епĕрех.
Çĕнтеретпĕр пурпĕрех,
Çĕнтеретпĕр пурпĕрех.

Йантра, йăхрав рожокĕ,
Йантра уççăн сывлăшра,
Ех, сывлăшра.
Епĕр йышпа çуралнă—
Вутра, ĕçре, тăвăлра,
Вутра, ĕçре, тăвăлра.

Урам тăрăх йурласа
Пионерсем пыраççĕ,
Ех, пыраççĕ.
Пĕр-пĕринчен иртмеççĕ,
Пĕрне-пĕри хистеççĕ,
Ертелпеле утаççĕ.

●

## ИВ. ВАШКИ

### Тантăшсене.

Ей, тантăш-ачасем!
Сире пайан
Хам йуррăма хавассăн парнелеп.
Вутпа çунан питсем
Çиçин çиçеç пайан,
Пуçах тайам
Сире хĕрӳлĕхпе...
Ĕççамрăксем!
Сирех хăват сĕнеп.

Пĕрпек йунтан, вĕт, епĕр пурте,
Пире кив пурăнăç пит ирсĕр..
Ех, комсомол! —
Малтан мала ес кӳртрĕн
Пире çĕн пурнăça,
Ĕçе — таттисĕр.

Ей, комсомол!
Пурне те патăн ес пире,
Йуна вутларăн пирĕн ӳт-пӳре.
Сисетпĕр-çке,

Хăт витĕрех темçе сийрен,
Комун магничĕ
Туртнине тӳрех.

Сисни çеç мар,
Ак, петилеткăмăр çумне
Хурар хăлхамăра,
Тăнлар:
Унта тапаç
Чĕремĕрсем патвар...
Пĕр партишĕн тăма —
Мĕнпур тăшман çине,
Хайар хумсем пекех, пырса,
Ман йыш çĕнет...

Ĕмĕрлĕхех шăратнă комсомол,
Пирте хастарлăх,
Сӳнми кăвар.
Ман йыш, ман йыш —
Çĕн пурăнăç çулпуçĕ.
Мĕлйунлăн динамит патне
Вăл куçрĕ тăвăлра çиçсе,
Хастарлăн...
Епир, епир —
Çĕн пурăнăç çулпуçĕ,
Сӳнми кăвар.

Инженера,
нарком йе токăре

Усетпĕр...
Пĕрлех çĕкленнĕ те çӳле.
Илйич йалавĕ
Çулăмăн çиçет, вĕт,
Çĕр домнăна вĕрсе,
Пиншер труба виçсе.—
Ăна мĕнпур кĕрешӳрен
Йăтса тухатпăр епĕр...

Хум-штурăмра
Ишет кунçул карапĕ,—
Пире Октябĕр çивĕтнĕ шăлтан.
Хайар кĕрешӳре малтан
Мала
Йалан çĕнми вăйпа
Утса пыратпăр.
Малах, малах!—
Чикке куратпăр.
Васкатăрах,
        васкатăр!—
Çав шанчăк вăйхалта.

Ей, тантăш-ачасем,
Хавассăн итлĕр:
Йепле саскулăмăр
Таçта та çитнĕ—
Мĕнпур çĕрте йанрать.
Пăх-ха,

Магнитогорск тăрписенчен
Çут хĕвеле
Тĕтĕм йавăнаť
Йевитлĕн.

Болъшевиксен сӳнми йалавĕ
Пур çĕре сăн çапнă...
Уйхир,
Вăрман
Унпа çеç шуçăмланнă...

●

## Хурçă кайăк.

Хурçă çирĕппĕн, йанравлăн
Тӳпере йухаť.
Тинкерсе пăхмашкăн пит хаваслăн
Кăмăлăм туртаť.

Еп куратăп пит те пĕчĕк пăнчă
Пĕлĕтре, хура.
Йуррăм та тивлетлĕн манăн ăнчĕ,
Ех, ăна кура!..

Тинкерсе-çке савăк, хăмăр куçăм
Тӳпене кĕрет.
Йавăнса, хаваслăн çамрăк пуçăм
Шухăшпа вĕрет...

Хурçă кайăк, вăйлăçав вăл, паттăр —
Ĕççыннин ачи.
Ирĕке карат̆ вăл сыхă чатăр —
Ирĕк кун каччи.

Халĕ çирĕп ун сассийĕ, вирлĕн
Ав, кĕрлет, кĕрлет...
Унпа манăн ирĕкшĕн хĕрӳлĕн
Ех, вĕçес килет!..

Хурçă сасă çирĕппĕн, йанравлăн
Тӳпере йухат̆.
Тинкерсе пăхмашкăн пит хаваслăн
Кăмăлăм туртат̆.

*
* *

Ак, мĕн лаптăк пурçăн йĕтĕн
Ман умри уйхирĕн.
„Пуç тайам çакнах“ — тейетĕн
Иешĕл хумне хирĕç.

Хумĕсем ун вăш-вăш çилĕн:
— Ку колхозăн — теççĕ.
Çавăнпах йепле куç илĕн
Ун çинчен хаљ еçĕ...

Çийĕ тикĕс...
Ах, мĕн тĕрлĕ,

Хĕвелпех вăл çиçĕ.
Ав, çилхийĕ йаркăч тĕрлĕн,
Çиçĕм пек-çке, çиçĕм...

Çитĕнет те шерепеллĕн,
Пурçăн сӳс парасшăн.
Тен, хăйех, хăйех вăл пĕлнĕ —
Сӳс кĕтет çĕршывăм...

Вĕт халь хапрăкпа колхозĕ
Иккĕш йĕкĕрешлĕ.
Уншăн çакă йĕтĕн касĕ
Çитĕнмех кĕрешĕ...

Çавăнпах йепле куç илĕн
Ун çинчен халь есĕ!
Хумĕсем ав, вăш-вăш çилĕн:
— Ку колхозăн, — теççĕ.

●

## Çу кунĕ — анне.

Тăван анне — çу кунĕ халь,
Хĕвелĕмĕр — ате.
Пире вăрман,
шыв,
улăхĕ
Хăна тухса илет.

Аса туптарĕ шкулăмăр
Хастар вĕренӳре.
Ак, халь хаваслă куллăмăр
Йанратрĕ лагĕре.

Таса ăспуç,
Тĕреклĕ пӳ...
Кунçул ыйтать вăйхал.
Йалэн, вĕт, хатĕрех епĕр
Ĕçре сирме ăйха.

Каллех ĕçе илетпĕр те, —
Кĕрешӳрех çунар.
Хамăр йурра ăш çилĕпе
Тĕнче тăрăх сарар.

Отред,
Карта пек, карнă сан—
Ĕрет çине ĕрет...
Çаплах кĕр ирĕ, харăссăн
Килетпĕр лагĕртен.

Кĕр çилĕ те чуптутăр-и
Çул тытнă хăмача.
Хаваслăхпала уттăр-и
Шкула мĕнпур ача.

— Тăр... тăр!.. чĕтренĕ,
Чупĕ те

Ирхи йанравлă сас,
Вăрман каллех
Ал çупě те,
Пуç тайě уйрăлса...

Тăван анне—çу кунě халь,
Хěвелěмěр — ате.
Пире вăрман,
шыв,
улăхě
Хăна туса иртет.

* * *

Чечен çут хěвелě
Тухасшăн халех.
Ав, тухăç тěпелě
Хěрелнě каллех.

Кěтет тăрă пěлěт
Ăна тухасса.
Таçтан та вăл пěлě
Савса пăхасса.

Çампа вăл кăвак та,
Йилемлě, тӳлек;
Туйатăн хăвах та,
Хěрлех-çке тӳпе.

Саваť аслӑ йышлӑн
Колхоз тыррине...
Ей, хирӗмӗр, йышӑн
Пур ӗç хӑнине!

Пит капӑр, илемлӗн
Çак ылтӑн уйа
Çанталӑк иленнӗ.
Ах, ирӗ уйар...

Ирхи кӗмӗл сывлӑм
Сыпайнӑ ыраш...
Ес те ӗнтӗ сывлӑн
Бензинлӑ шӑрша.

●

## Çӗнӗ хирте.

Кассӑн-кассӑн вӗçкелет
Йешӗл хирте çилӗ.
Çамрӑк чунӑмçӑм çиçет —
Уйхиртех ун килӗ.

Аслӑ тинӗс йевӗр уй,
Çил йуртаť ун урлӑ,
Хумханаť вӑл, уй-уй-уй!
Сап-сар ылтӑн хумлӑ.

Хумӗ ылтӑн, ылтӑн хум,
Ун çилхийӗ пурçӑн.

Йешĕл хирĕн çĕнĕ тум —
Йанăравлă хурçă.

Тинĕс çинчи карапсем
Йевĕр, машин çарĕ.
Хумсене касса кĕрсен —
Уçăлат̆ йанравĕ.

Моторсен сасне илтсен
Чунăм хавасланчĕ,
Моторпах еп тус иккен —
Ĕç ман питĕ ăнчĕ.

Пур найанлăха кастар,
Çĕн моторăн шавĕ!
Çак саспах выља хастар,
Çак кунçул йăхравĕ.

●

## Хире пăхрĕ сар хĕвелĕ...

Хире пăхрĕ сар хĕвелĕ
Кармашса вăрман çинчен.
Пĕлнĕ, тен, йепле илемлĕ,
Пĕрлешӳлĕх ĕçĕнче.

Шăп çанталăклă ир витĕр
Сăрханат̆ мотор сасси

Савӑнулӑ ӗҫ кӗввипе...
Кама витмӗ-ши сасси?

Хӑласланчӗ-ҫке ак, жнейкӑ,
Ертел тулнӑ хыҫала.
Трактӑр, есӗ тыр ӑшне кӗр,
Трактӑриспа уҫ ҫула!

Пучахсем пухатпӑр епӗр
Тырӑ вырӑннӑ тӗлте.
Пирӗн хирӗ ылтӑн йевӗр,
Ах, кӗлти, йепле кӗлте!..

●

## Шывҫуна.

Ак, ирхи хӗрелнӗ шуҫӑм
Сӑнне сапрӗ Атӑла.
Атӑла тӗллерӗ куҫӑм —
Курчӗ хурҫӑ шывҫуна.

Сывлӑша касаҫ пропеллӗр,
Йанӑрарӗ ҫӗн мотор.
Умӗнче лараҫ ун шофӗр —
Кантӑк куҫлӑхлӑ маттур.

Хуларан хула патне вӑл
Атӑл тӑрӑх виҫрӗ ҫул.

Вăл шăват ак, çил те тăвăл!
Куçупа ес пăх та йул.

„Моторсен ĕмрийĕ килчĕ,
Хурçăланчĕ те çĕршыв“ —
Пуçăмра ман шухăш вĕçрĕ.
Çырана лăпкарĕ шыв.

* * *

Кашла, кашла, хура вăрман,
Пайан ес манăн чун уççийĕ;
Мĕнпек çĕкленнĕ кăмăл ман
Вĕçме кăтралă пуçу çийĕн.

Сисеп, пĕлетĕп ачаран,
Туйап чĕлхесĕр шăплăхна та.
Йепле хам сассăма чарам,—
Сана тăванлăн еп пăхнатăп.

Ах, кунĕ ăшă... тен, вăл та
Пĕр саншăн уçнă та-и алăк?..
Вăрçаттăн вăйлă тăвăлпа
Пăлхавлă урнă чух çанталăк.

Унчух силленнĕ мăн йуман,
Хура тăрри çилпе алхаснă.
Пĕр шăп кĕтес кунта йулман,
Тем тĕрлĕ сас сана, вĕт, каснă.

Йе кунĕ йăлтăр çутатсан,
Инçе çĕртен хĕвелĕ анлăн,
Сана илемлĕн вутласа
Тумна пит капăрăн сăрланă.

Анчах айра сан шăп каçах,
Йăвăç хушши тĕтрелĕ каçĕ.
Сан çиййĕн урлă тек каçса
Тăхланлă пĕлĕтсем йухаççĕ...

Йанравлăн халĕ кашнă ир
Сана çурат гудок мăн саслăн.
Санпа çак савăт кашлани
Мĕнпек пайан мана хаваслă!

●

## Каникул хыççăн.

Сывă-и, шкулăмçăм—пурăнăç килĕ,
Манăн телейлĕх йăви.
Акă, епир те каникултан килнĕ,
Йышăн та ил!..

Акă, каллех уçă сулхăм кĕр ирĕ...
Хăвăн пур ĕç ачийех
Сан алăкран хаљ парад пек кĕрер-и
Ăс лаççине?!.

Пирĕн çийе усăнайнă йалав та
Шкул тăрĕнчен саламлать!
Кĕтнĕ, çампа тинкерет айала та
Вут-çулăмла.

Çунтăр çак хĕрлĕ хăмачă йевĕр
Пирĕн чечен пурнăç та.
Пиçнĕ çырлапек, çиçетпĕр-çкеепĕр...
Шкул, вырнаçтар!

...Халĕ анчахчĕ вăрман, тăрă шывĕ,
Лагĕрте иртнĕ кунсем...
Пирĕн асра та çĕн улăх шăрши, вĕт,
Шавлă ĕçсем...

Сарă хумсем те асрах-çке йухаççĕ,
Хаљ хăлхара пек мотор...
Пар ĕнтĕ, ал, кĕнеке, хут, кункаçĕ,—
Ес умма тăр!..

## Итем çинче.

Тӳнкĕр-тӳнкĕр... тӳнкĕр-тӳнкĕр!.
Сас йухать, йухать инçе
Сарлака итем çинче.
Ех, капанĕ пĕр кĕтӳ-çке,
Тăсăлаççĕ темиçен,
ик йенчен.

Сарăм мар пайан итемĕн,
Çук, пайан йăлт урăхла,
Савăнса машив ухлаť...
Кĕлтине те тавăр темĕн,
Çук, пайан йăлт урăхла,—
хапрăкла...

Ку сăртран чылай айалăн
Йалăм сарăлнă çумма.
Хурçă ĕç кĕвэи чупаť...
Ех, итлет йăмралă йалăм,
Чăтаймасăр ал çупаť
вăл çампа.

Миçе пăт сапаť-ши тырă
Ку бригадăмçăм пайан —
Тĕрмешсе мĕнпур вăйран?
Машинпа ăçтан-ха ырăн,
Ун ĕçнех пуçа тайан
ес пайан.

Тӳнкĕр-тӳнкĕр... тӳнкĕр-тӳнкĕр...
Сас йухаť, йухаť инçе
Сарлака итем çинче.
Ех, капанĕ пĕр кĕтӳ-çке,
Тăсăлаççĕ темиçен
ик йенчен.

## Ĕçлĕ трийĕр.

Ех, йурлаТ хавассăнах
Ĕçлĕ, хурçă трийĕр.
Вĕт, хаЉ йалăмçăм ăна:
Килĕр, терĕ, килĕр!..

Сирпĕнет,
Сикет, йухаТ
Тутă тыр пĕрчийĕ.
Ав унпа вĕçрен тулаТ
Йешчĕк, мих чĕрçийĕ.

Çĕн ертел ĕçлет ĕçне,
Вăл суртлаТ-çке тырă.
Çакă ĕçĕн тивĕçне
Нийепле те ырмăн.

Ĕçĕн кăмăлĕ кунта
Вичкĕн, чĕрĕ,
Паттăр.
Ертелти çĕн хăвата
Хурçăран хыватпăр.

Халĕ вĕçтĕр таврара
Хылчăкпа тусанĕ.
Пирĕн пурнăç колхозра
Кулленех йусанĕ...

Ех, йурлат хавассăнах
Ĕҫлĕ, хурҫă трийĕр.
Вĕт, халђ йаламҫăм ăна:
Килĕр, т[illegible]рĕ, килĕр!

* *
*

Пырат̌ пайан илемлĕн
Ҫемҫен, ҫемҫен пусса —
Пионерпа иленнĕ
Ҫĕн тус пĕрле утса...

— Йулташ, кайатпăр пулĕ,
Ăҫтан йулар-ха халђ?
Пире какай пар, кролик, —
Тирне патшалàха.

Ҫĕршывăма какайшăн
Ес хаклă тивĕҫре.
Епĕр йалан наказшăн
Пулатпăр чăн ĕҫре.

Кролчатниксем тăвар та,
Пăхар таса, аван.
Ҫĕклентĕр вăйхăват та
Хаваслăхпа йалан.

* *
*

Вĕренў йалавĕ анлă̆н
Малалах йертет пире.
Сарă̆л, сарă̆л, ес вулканлă̆н,
Çак ударникле ĕрет.

Çĕн пĕлўшĕн йă̆тса илчĕ
Кă̆кă̆ра пĕр паттă̆р марш.
Атă̆р, тă̆вă̆ллă̆н та çивчĕн
Техникă̆ тă̆рне ухар!..

Ă̆слă̆х крепă̆çĕсем урлă̆
Ал тă̆сат кĕтен телей,
Çапă̆çу, вĕт, — пирĕн пурнă̆ç,
Çавă̆нпа çитме тĕле.

* *
*

Йалан большевисă̆м
сўнми вутлă̆ тă̆вă̆л, —
Халь ун хă̆ватне те
виçсе илес çук.
Мĕн пур Сойуза
тимлĕнех
вутласа, вă̆л
Ударлă̆ мă̆н ўсĕмлĕх
кўлчĕ кă̆чух.

Ун патăрлăхне
  авăрланчĕ ĕççарĕ,
Çампа çивĕчленнĕ
  çак пирĕн ĕрет.
Темчул çĕнтерӳлĕх
  ку йышăм куçарĕ,
Татах —
  кĕрешӳ те —
  ĕçрех хыт хĕрсе.

Кунта хапрăк-савăт
  çунат сарса пачĕ..
Çитнен стройсене
  шутлаймăп та хам.
Кĕрет-çке хире
  çĕнĕ кун сăнсăпачĕ:
Тырпул индустрийĕ —
  тĕш тырлă гигант.

Уйхир чечекленчĕ, —
  колхоз пурнăçпе, вĕт,
Сарлат вăл кунтан та
  Сойузăм вĕçнех.
Ун тăрăх шăвнат ав,
  машин хурăç пĕвĕ
Туртсах та илсе
  пирĕнтен
    ал ĕçне.

Арканнă йăранĕ,
  арканнă виç пусă, —
Кив ĕмĕр вихçан та
  тек тухмĕ ума.
Пĕлетпĕр:
Пĕчченлĕх параймĕ халь усă...
Епир пĕр кăварлă
  ĕçре кар тăма.

Темпек хĕсĕке те
  çапса аркататпăр,
Куллен асланать,
  асланать çул умра...
...Шыва та кӳлетпĕр,
  тăва хускататпăр...
Вутланнă ав Днепăр,
    Кузпаз та
      Урал...

Варланчăк та йунлă
  чуралăх тĕнчийĕ
Пĕтмелех пусарăнчĕ
  кризис айне...
Епир пĕр малах
  Ытканатпăр пит çивчĕн, —
Ку вилĕмлĕх йалт —
  пирĕн клас тăшманне...

●

## Епӗр КИМ çарӗ...

**Пӗтӗм тӗнчери ӗççамрӑксен кунне.**

Ан йӗр, кӗр кунӗ,
Мӗскершӗн макрас-ха?!.
Çил!
Тӑсса йар çӗн йурра!..
Ес те, хӗвелӗ,
Тухса ахӑрас хӑй,
КИМ-ӗн палли пек курнас...

Тух!
Çав хура-хӑмӑр пӗлӗте сир те,
Тух!
Саламла тӳперен.
Савӑт тӑрписем,
Саламлӑр есир те,
Ей, хир,
Саламлӑр пире!

Епӗр пайан
Уйавра-çке — ӗççамрӑк,
Пурте кӑварлӑ чӗре...
Хамӑр аçа[1]-тӑк,
Вирлӗн куçар-и,
Вирлӗн мӗнпур тӗнчере.

---

[1] Аслати.

Ак, çывхарат
Мун тĕнчийĕшĕн тăвăл,
Епĕр ун çисĕм-аçи,—
Тухнă çампа
Уйава хаљ мухтавлăн
Вăй та вичме ĕç ачи.

Кур!
Йалавсем усăнмаççĕ пĕрре те,
Пăх! вĕлкĕшеççĕ çӳлте.
Вутлăн, хăватлăн
Çĕклеççĕ пире те:
— Пирĕн,
Телейлĕ çул! тет...

Пирĕн сасра—
Çĕнтерӳлĕ ĕç шавĕ,
Пирĕн сасра—машин.
Ах, пионер та
Саљуглă йышпа вĕт...—
Епĕр КИМ çарĕ кашни.

●

## Ал. Каттай

### Пирĕн йурă.

Пирĕн йурă хыт, чĕтревлĕн
Кисретет лăпкă ире.
Ир-ирех çурхи тĕтрелĕп
Отред тухрĕ лагĕре.

Çапăçмашкăн хатĕр!
Вĕренмешкĕн атăр!
Ут, ес, çирĕп, паттăр çамрăк çар!
Нимĕнле çилтăвăл
Пире çĕнеймест вăл!
Тăшмана тухар та салатар!

Сывлăш уçă, йе шыва кĕр,
Ав, хĕвелĕ пĕçертет...
Çакăнта пире çĕн лагĕр
Еçлемешкĕн вĕрентет.

Çапăçмашкăн хатĕр!
Вĕренмешкĕн атăр!
Ут, ес, çирĕп, паттăр çамрăк çар!
Нимĕнле çилтăвăл

Пире çĕнеймест вăл!
Тăшмана тухар та салатар!

Çĕршыва çĕн кадăр кирлĕ,
Колхоза йе савăта.
Вĕренетпĕр епĕр вирлĕн
Пурама, каскалама.

Çапăçмашкăн хатĕр!
Вĕренмешкĕн атăр!
Ут, ес, çирĕп, паттăр çамрăк çар!
Нимĕнле çилтăвăл
Пире çĕнеймест вăл!
Тăшмана тухар та салатар!

Çĕнĕ пурнăç — çĕнĕ тапхăр,
Епĕр вичкĕн вăй пухар!
Тăшмана ватса таптатпăр,
Хурăç хыватпăр çĕршыва.

Çапăçмашкăн хатĕр!
Вĕренмешкĕн атăр!
Ут, ес, çирĕп, паттăр çамрăк çар!
Нимĕнле çилтăвăл
Пире çĕнеймест вăл!
Тăшмана тухар та салатар!

# Май.

Хăй сăнне ав, пайăрканăн
Тӳперен сапаť хĕвел.
Май кĕрлет, — хулапа йалăн...
Ĕçлекен вăйне хĕвет.

Çу уйавĕ лăпкă çилĕн
Хĕлĕх йевĕр кĕвĕлет...
Сывлăшра ав, силĕн-силĕн
Йалав вутлăн вĕçкелет.

Уйава мухтавлăн хирĕç
Пуç тайаççĕ корпăссем.
Кăмăлпа хĕвелĕ ирĕн
Çĕкленеç мӳрйе пуçсем.

Çĕршывра хастар, патваррăн
Çитĕнеççĕ стройкăсем.
— Йулхава, ĕçчен, ан парăн,
Ĕçре пиçчĕр мускăлсем.

Стройкă, стройкă, ех, пит аслă,
Темпăпа виçет вăйа.
„Путиловĕц" пит хаваслăн
Кисретет çурхи уйа.

Тыр пĕрчи ӳкет хĕлхемлĕн,
Йăр-р... йулаççĕ касăсем.

Çакăнта çурхи илемлĕх,
Ĕçпеле иртеç кунсем.

Хĕрт хĕвел, хĕртех, çӳçелĕн
Ытала ӳсен çĕре!..
Çурхи йурă, селĕм, селĕм
Вырнаçат̆ ман чĕрере.

Кӳршĕре, мулсен çĕршывĕ
Ирĕк йурă йанратмаст̆.
Ĕçлекен хĕвеллĕ кунăн
Тухаймаст̆ вăл урама.

Май кунне фашис хупланă,
Халăха перет туппа.
Ĕççынни патвар арсланăн
Уйава тухат̆ вăйпа.

Фашиссен йăвине хирĕç,
Хĕвеланăç тыткăнне
Тĕнчери ĕçхалăх хирĕ,
Тăвĕ хăйĕн çут кунне.

Кивĕ пурнăç, хăрăк, çĕрĕк,
Кивĕ пурнăç халь вĕçре.
Йешĕрет ак, пурнăç çĕнĕ –
Çĕнĕ пурнăç халь ĕçре.

Çĕн хăват – ударлă темп вăл,
Çĕршывра вăйхал виçет.

Пулĕ вăрçă! тухĕ тăвăл!
Ĕç алли — мула ишет!..

Тĕнчипех çĕршыв пĕр пулĕ,
Пĕр çемйе, пĕр кил, тăван...
Ав, çунат Октабĕр çулĕ—
Çав çулпа утар... утар!..

* *
*

Сар хĕвелĕ пĕçертме пуçларĕ,
Сĕлкĕшленчĕ, йĕрчĕ шурă йур.
Кам пайан пўртре чăтса ларĕ —
Йăхăрат пире хаљ çурхи тул.

Шăнкăр-шăнкăр...чанкама йур шывĕ
Лапсенче йухат ав, тăп тулса.
Иртрĕ, иртрĕ хĕлĕн урнă сивĕ,
Иртсе кайрĕ сивĕ хурланса.

Шĕлтĕр-шĕлтĕр иртеннпех çĕн трийĕр
Амбарга ларат тыр сăвăрса.
Чĕвĕл-чĕвĕл... ачасен сассийĕ...
Ачасем суртлаççĕ çавăрса.

* *
*

Çурхи кунĕ лăпкă, уçă, тăрă,
Хĕвелпе çу йевĕр ирĕлет.

Ирĕк йуррăм, йухăн уйхир тăрăх,
Манăн йурă çепĕç тĕнĕрет.

Тăван хирĕм анлă та пит аслă,
„Фордзонсем“ сĕвеç хура çĕре.
Пайан епĕ ирĕк, уçă саслăн
Парнелесшĕн йурă уйхире.

Çĕр кăкрийĕ нÿрлĕ те, йанк тарăн
Лемăхпа йулат ак, касăлса.
Ушкăн ĕçшĕн хаваспах уттарăн
Ĕçлеме пĕр йышлăн савăнса.

Ех, йепле, илемлĕн çурхи ирĕн
Сапаласа акаť ак, машин...
— Чăнахах çĕнелчĕ, вĕт, уйхирĕм!..
Машин ăнтарĕ малашне.

Бригадăсем ĕçлеççĕ ак хĕрÿлĕн,
Пĕр-пĕринпе хастаррăн ăмăртаç...
Пур ĕçе илет пĕр çĕнтерÿлĕн.
— Вăй-халсем выђаççĕ хамăрта...

Чăнкăр-чăнкăр.. хыçалтан сÿрийĕ
Пуçтарса пыраť пур „çÿпçапа“.
Сывлăшра йарнаť ак, ĕç йуррийĕ,
Айакка кайаť, мала куçаť.

* * *

Çут хӗвел хӗрелсе
Йӑл тухсассӑн,
Лӑпкӑ ир йанкӑрах.
Пирӗн ут — хурçӑ ут
Уçӑ саслӑн
Савӑнса уйхире сухалаҫ̌.

Хаљхи уй хурçӑпа
Пин чӗрелӗ,
Пинпеле хашлатаҫ̌ ун чӗри.
Ӑмӑртаҫ̌,васкатаҫ̌
Ӗç аллийӗ,
Ӑçта-ха хӗрӳ ӗç ку-тери?

Кам ӗçрен пӑрӑнаҫ̌,
Кам прогулшчик, —
Ей, ударник, часрах çапса хуç!..
Çӗршыва
Хурçӑпа çӗнетес-тӗк,
Пирӗн вӑй йаланах — малти пуç.

Пирӗн вӑй, çиçӗм пек,
Çӗнтерӳлӗ,
Пирӗн вӑй кисретет тӗнчене.
Ӗç алли,
Кӑвар пек, вӑл хӗрӳлӗ,
Вутпала йалкӑшса çитӗнет.

●

*
* *

Кӑн-кӑвак уҫӑлчӗ
Ҫут тӗнче чаршавӗ.
Лӑпкӑ ҫутҫанталӑк
Йанкӑрах уйар.
Ир-ирех пуҫланчӗ
Колхоз ӗҫӗн шавӗ,
Еп те чупса тухрӑм
Ӗҫе ҫак уйа.

Ҫӳлӗ те пит аслӑ
Йаштак сӗм вӑрманӗ,
Ҫавра ҫутӑ кӳлӗ,
Лапам та ҫаран...
Суксинчен, вӗт, авӑ,
Ҫаврӑнать арманӗ,
Ана колхоз тунӑ—
Вӑл ҫӗнӗ арман.

Ех, йепле чечеклӗн
Йешерет ҫак улӑх,
Сӗрӗшсе ларать вӑл
Ҫуштӑн савӑнса.
Катаран курнать ак,
Сар пучахлӑ тулӑ,
Ана хаљ ҫулаҫҫӗ:
Ӗҫ пырать ӑнса...

Симĕс пуçлă клевĕр
Хĕрлĕ шерепеллĕ,—
Ăш çилĕ йуратнă
Ачашлат, лăпкат...
Кунта хаљ кĕрлет ав,
Мухтанат пропеллĕр...
Ĕçри уçă йуpă
Йарăнат сăпкан...

Кунĕ нăраланчĕ,
Хĕвел пиçсе çитрĕ,
Йăлтăртин çиçеççĕ
Хурçă çавасем.
Йаш çамрăк ўт-пĕвĕм
Мана ĕçпе сыхрĕ,
Еп те çава тытрăм —
Выљанаç алсем..

●

*
* *

Ирхи сывлăш уçă, ырă,
Ыйхăран ир вăранап.
Тўпе йанкăр, çутă, тăрă,
Урама тухса утап.

Шурă йурĕ çутă кĕмĕл:
Çамрăка тек илĕртет.
Йĕлтĕр, йĕлтĕр, — çирĕп йĕлтĕр!
Анатала вĕлтĕртет!..

Ӳпке манӑн — хурҫӑ вӗркӗч,
Сывлӑшпа ӳте ҫӑват.
Сулхӑн ҫилӗ вӑштӑр вӗрчин,
Ман ӳт-пӗвӗм тав тӑват.

Ех, уйхирӗ, аслӑ, аслӑ
Ех, пит уҫӑ йарӑнма.
Вӑхӑт ҫитрӗ. Пит хаваслӑн
Вӗҫтеретӗп вӗренме.

Вӗренмешкӗн пит те лайӑх
Тулли уҫӑ пуҫпала.
Вӗри йунӑм ӳт-пӳ айӗн
Хӗрӳленсе куҫкалат.

●

## Улӑх йурри.

Шӗнтӗ улӑхӗ пит аслӑ,
Ҫилпелен вӑл хумханат.
Кунта ӗҫ хӗрет хаваслӑн,
Колхоз ӗҫ вӑйпа ӑнат.

Ҫырли
Хӗрлӗ шерепеллӗ,
Ҫулҫипе выљат хӑва.
Кунӗпе кӗрлет пропеллӗр,
Ҫӗмрӗлет ҫӗн вӑйхӑват.

Ех, ман тантăш пит те паттăр,
Йарăнса çулаť пайан.
Йашсем епĕр ăмăртатпăр,
Кунта халĕ çук найан.

Шурă хурăн пуç çилхелĕ,
Çамрăка пуçне тайаť.
Пирĕн йурра ăшă çилĕ
Айака илсе кайаť.

●

## Лагĕрте.

Ирех вĕрет вара уç çилĕ,
Тӳпе караť кĕрен йалав.
Корниот сассийĕ силĕн-силĕн
Пире тăма чĕнет йалан.

Акăшсем пек карталанса
Хĕвел ăшши çине тухатпăр.
Уç сывлăша çăвар карсах
Кăкăрсемпе туллин çăтатпăр.

Çăвăн илемлĕ кунĕ çутă,
Çанталăк пирĕн хаљ—анне.
Хĕвел — атемĕр, хĕрттĕр, çутăр
Кашни ăççамрăк суранне.

Хӗвел хӗртни пире те усӑ,
Ҫан-ҫурӑма кӳртет вӑйхал.
Ӗҫлер, выљар та, чарӑнусӑр
Сыхлар пӗр ҫирӗп сызлӑха.

Саланатпӑр чӗвӗлтетсе,
Ҫӑртансем пек, кӳлле чӑматпӑр.
Шывран тухса, йуна хӗртсе
Амӑртмала пӗрле чупатпӑр.

Пирӗн ҫӗршыв сынсем кӗтет,
Йалпа хула ӗҫчен ыйтаҫҫӗ.
Ҫамрӑкранатӑх хаљ лагӗрте
Ӗпир ӗҫпе хунатпӑр тачӑн.

Ӑшчиксене вутпа чӗртсе
Хӗрӳ ӗҫе алла тытатпӑр.
Ҫӗн пурнӑҫа, пир пек, тӗртсе
Малтан мала, мала утатпӑр.

●

## Каникулта.

Тӑп тӑрӑ каҫ. Ех, йурӗ шура́,
Ҫӑлтӑрсем выљаҫҫӗ тӳпере.
Тӑлӑх уйӑх, малалах ав, шурӗ,
Хушшӑн-хушшӑн, сулхӑн ҫил
вӗрет.

Апат ҫирӗм. Апатланнӑ хыҫҫӑн
Уҫӑлмашкӑн тухрӑм тулала.
Йӑтӑсем вӗркелеҫҫӗ уҫҫӑн...
Тантӑшсем утаҫҫӗ шкулала.

Ак ҫӗнӗ шкул. Ҫӳлӗ те пит аслӑ,
Тимӗрпе мӗн витнӗ ун тӑрне.
Чӗре манӑн сикрӗ пит хаваслӑн...
Ҫӗнӗ шкул—колхозшӑн, вӗт, парне

Шала кӗтӗм епӗ. Вӗренеҫҫӗ...
Унтах вӗренет ман ват анне.
—Шуркӑ, Шуркӑ, килтӗним-ха?..
теҫҫӗ,
Алла чӑмӑртаҫҫӗ хыт манне.

Ак, Маруҫ та вӗрентмешкӗн ларнӑ,
Вӑлах — комйачейкин ҫыруҫи.
Куҫсемпе еп шухӑша каларӑм:
—Ну, мӗнле-ха санӑн ӗҫ-пуҫсем?..

*
* *

Пӗр ҫултах улшӑннӑ тӑван йалӑм,
Йала кӗнӗ йӑлтах ҫӗн йӑла.
Хуларан, ӗҫлемешкӗн йанӑ,
Ӗҫлемешкӗн килтӗм еп йала.

●

# Йулташа.

Ив. Вашкине.

Илĕртсе мана уйхирĕ
Кăчăк туртрĕ хăй патне.
Çурхи йанкăр ире хирĕç
Ылтăнлаť сăнсăпатне.

Кăмăл, ķăмăл, уçă, ырă,
Кăмăл тулчĕ чĕрере.
Пурçăн йаркăçлă тĕш тырăн
Пуçĕ авăннă çĕре.

Шăрçаланнă кĕмĕл сывлăм,
Сыпнă йешĕл шерепе.
Ес ху та сĕтеклĕн сывлăн
Ирхи сывлăм —
Шерепет.

Йарăмлăн, хĕвелĕ йевĕр,
Куçăмсем шăваç инçе.
Ав, лере, чечеклĕ клевĕр —
Йешерен ука, инçет...

Сĕлĕ, йасмăк, пăри, тулă
Кассăн-кас хире виçет.
Ку уйхир, илемлĕ, тулăх—
Тĕрленет сăнпа, çиçет.

Тух-ха, тух уйа,
Ваҫукăм,
Ыталар ӳсен ҫĕре.
Ех, уйхир, кичемлĕх ҫук ун,
Пĕр йурлар-ха чĕререн.

Ай, тӳпе, тĕнче чаршавĕ
Уҫăлаҫ ман умăмра.
Йанăраҫ машинă шавĕ,
Ку кĕвве ҫитмест тумра.

●

## Ленина асăнса.

Ăшчикĕ кансĕрленнĕ,
Тапма прахаҫ чĕри.
Пиртен ҫухалчĕ Ленин
Ах, хуйхă ҫав-тери.

Ес канлĕ сывăр, Ленин,
Гранитлă тупăкра.
Пире ес ҫул пиллерĕн,
Ҫуккишĕн ырлăха.

Хаҫ пурнăҫăн илемлĕхĕ
Пыраҫ тӳрĕ ҫулпа.
Ес чĕртсе хăварнă хĕм
Ҫунаҫ ак ҫулăмпа.

Шăм-шакăмăр пит тӳсĕмлĕ
Ĕçре вĕрет хаԓ йун.
Пирĕн йыш пит ӳсĕмлĕ,
Йышра халĕ мĕлйун.

Кив пурнăçа йăлт ватрăмăр,
Бетонланатӳ хула.
Уйра кĕрлег ав, трактăрĕ,
Савăнтаратӳ йала.

Сансăр епĕр тăхăр çул
Утатпăр малала.
Йалпа хула хаԓ тăвăççăн
Патвар тытаç аԓла.

# ИВАН МАЛГАЙ

## Епӗр ӗҫре.

Йӑнкӑртатрӗ
Йӑнкӑр-йанкӑр...
Авӑ, трийӗр хаҫ ӗҫре.
Тулӑ, сӗлӗ
Тасататпӑр,
Таса тӗшӗ пит хитре.

Пионерӑн —
Йышӗ пысӑк,
Хастарпа ӗҫрен йулмасҭ.
Мӗнпек ҫивӗч
Унӑн вӑйӗ,
Ӗҫре вӑл канма ыйтмасҭ.

Ҫавӑраҫҫӗ
Иккӗншерӗн,
Агитлеҫҫӗ ушкӑнпа.
Алра! — тетпӗр
Шултра пӗрчӗ,
Авӑсатпӑр трийӗрпа.

Ҫуракишĕн
Епĕр хатĕр,
Хатĕр — йышлă пионер.
Ĕҫ ĕҫлесшĕн
Хĕпĕртетпĕр,
Ĕҫпе вăйлăн ҫитĕнер.

Алра манăн
Пăт чĕресĕ,
Вăрлăха виҫеп пĕрмай.
Ҫамрăк чунăм
Ҫĕкленет те,
Ҫĕкленет ĕҫленĕ май.

●

**Выртмара.**

Тӳлек лăпкă
Тăрă каҫ,
Ҫăлтăрсем выљаҫҫĕ,
Симĕс тумлă
Ҫĕршыва
Пит тӳлек пăхаҫҫĕ.
    Ачасем ав,
    Йурăра,
    Сассисем пит уҫă.
    Вĕсем халĕ
    Выртмара,
    Кĕҫ килес пек шуҫăм.

Вăйă хыççăн
Вăйăсем,
Вěçěмех хавaслăх.
Ёлěкхи пек
Мăшкăлсем
Çук, кунта кураймăн.
    Акă Петěр
    Кăшкăрать:
    — Билетсем сутатăп!.
    Журналсем сарма
    Выљав
    Çакăнтах тăватăп.
Каçхине выљав
Туса
„Хатěр пул“ çырнатпăр.
Кайрантан,
Темпек савса,
Ушкăнпа вулатпăр.

●

**Çуркуннепе ирхине.**

    Ех, хавас-çке
    Пит аван-çке,
    Çакă кăмăллă ирпе.
    Çутă шуçăм, çутă пурçăн,
    Хěвел кулчě майěпе.
Çурăн кунě
Çитнě майě,

Ирĕк илчĕç чĕрчунсем.
Хĕпĕртерĕç, çунатлапчĕç,
Хавасланчĕç ачасем.

Пирĕн Петĕкă
Акă, тухнă
Уçă-сывлăш сывлама.
Сăнсăпачĕ йăлт хĕрелнĕ,
Тулăх пичĕ — чăн çырла.

Вăл ав, тытнă
Хăма татăк,
Ав, тăвасшăн хăй ĕçне.
Шăнкăрчсемшĕн
Пӳрт лартасшăн,
Тăрăшса хурать вăйне.

Шăкки-шакки!..
Шаккать вăйлăн,
Мĕн пур вăйĕ ĕç синче.
Пионерăн ĕçĕ çакă
Çурхи кăмăл çийĕнче.

●

## Каçхине.

Пĕлĕтре çăлтăрсем сапаланнă,
Шăрçасем тăкăнса кайни пек.
Тинкерсе çуталма хыпаланнă,
Çуталаç выљама хăйнипех.

Ачасем клубала кайкаларĕç
Хаçатсем, журналсем вулама.
Алђă темшĕн кайма шутламарĕ,
Хăйне хăй вăл, кайма каламан.

Пӳртĕнче, сĕтелре çамрăк Алђă
Амăшне вăл хутла вĕрентет.
Ун çине савăнулăн пăх, — халĕ
Букварь вĕренсе пĕтерен, — тет.

Вăл пайан килĕнче ĕçе кĕнĕ
Йарăнса килсенех çырмаран.
Вĕсен çук Алђăпа кĕвĕçекенĕ,
Йуратаççĕ ăна — пионера.

Тăван амĕш хутла пĕлейместчĕ,
Вуласа çыркалатчĕ аран,
Халђ ĕнтĕ пĕлӳсем çĕнелеççĕ,
Вĕренет хăй саван ачаран.

Алђă пичĕ çавра панулмилĕ
Пиçсе çитнĕ, — улма темелех.
Çулпала тултарать шăп вунпилĕк,
Апрелте вунулта кĕмеле.

Пур ĕçрете ĕçлет çĕнтерӳлĕн,
Йаланах ĕçпеле ун чĕри.

Вăл калаТ: пирĕнте тĕнче рулĕ,
Епĕр — вăй, епĕр, — тет, — тĕнчере.

Пионеркă çунаТ кулЂтпоходшăн,
Хисеплет походри вăхăта.
Йулташне те чĕнет, — ес те хутшăн,
Тухнă та ăмăртма похода.

●

## Пионери, вĕренме!

Пионери,
Пул çивĕч, хастар,
Васка ес
Çĕн ĕçре, çиçĕм пек!
Пĕлӳпе хĕрӳ ĕçре
Кастар,
Санăн тус —
Хĕрӳ ĕç, кĕнеке.

Çакна хушнă пире
Карл Маркс —
Вĕренсе
Тăшмана çĕнтерме.
Çавăн пек
Ленин панă ăс:
— Вĕренме,
— Вĕренме,
— Вĕренме!

Ĕçлĕх шкулĕ
Чĕнет вĕренмешкĕн,

Ĕç ачийĕ пиçет
Вĕревӳре.
Тăшмана
Тĕпренех çĕнтермешкĕн,
Пионери,
Хатĕр пул ес ĕçре!

Маркс, Ленин
Вĕрентни
Питĕ хаклă,—
Тăшмана çĕнмели
Хĕçпăшал.
Çакна вĕренме
Пит хăватлăн,
Пионер, тытăн ес
Алпа ал.

Ăслăлăх никĕсне
Кышламашкăн,
Пионер, нихăçан
Ан ӳркен!
Тĕнчери тăшмана
Кăкламашкăн
Пире кирлĕ
Нумай пĕлекен.

Парти ыйтать
Пирĕнтен çирĕп кадăр,

Парти хушаť
Пире вĕренме.
Пионерӗ! пулар
Йалан хатĕр,
Вĕренсе
Тăшмана ҫĕнтерме!

●

## Ҫитĕну́сем савăнтараҫҫĕ.

Ҫамрăк чĕре пайан
Кăварлă,
Ҫитĕну́сем савăнтараҫҫĕ.
Хĕру́ ĕҫре епир ударлă,
Бригадăсем
Мала тухаҫҫĕ.

Тăван ҫĕршыв
Пайан ак, урăх,
Кĕрлеҫ кунта
Ҫĕн савăтсем...
Уйра колхоз
Анисем тăрăх
Ĕҫре васкаҫҫĕ
Хурҫă утсем.

Пуйанлăхпа
Ҫĕршывăм паттăр,

Ĕçре електăр вăй парать.
Тăшман пусне
Çапса вататпăр,
Тăшман пайан
Тĕпрен кăкланать.

Çĕршывăмра
Асаплăх йулмĕ,
Ĕçхалăхĕ ĕçлет пĕрле.
Çĕршывăмра
Ударлă, сума сумлă,
Вăрнар,
Куславка, Çĕмĕрле...

Тĕттĕм йалсем
Çутта тухаççĕ,
Кашни йалтах
Йе шкул, йе клуб...
Хĕрарăмсем кĕнеке вулаççĕ:
Йалта ан пултăр теççĕ, — пуп.

Çитĕнӳсем
Сахал мар пирĕн —
Пролетари çĕршывĕнче.
Бригадăсем
Татах та вирлĕн
Хĕрсе ĕçлеççĕ
Стройкăсенче.

## Вĕренӳре.

Шкул тулли ача-пăча
Амăртса вĕренетпĕр,
Ăслăлăха çавăрса
Пуççене илетпĕр.

Хавасланса ӳсетпĕр
Ĕçпе вĕренӳре.
Тăшман пуçне ишетпĕр,
Ан пултăр пирĕнпе!

Вĕренӳрен йулмастпăр,
Ан пултăр пĕр прогул!
Хĕрсе кĕнеке вулатпăр,
Вĕренмели темчул.

Кашни урок пит хаклă
Пире парать ăс-тăн,
Çавăнпа та хăватлăн
Вĕренетпĕр хыттăн.

Ĕçлетпĕр те вĕренетпĕр,
Çĕн пурнăç калчисем.
Çирĕпленсе ӳсетпĕр
Çамрăк пионерсем.

●

## Ҫураки кĕвви.

Ак, пуҫланчĕ уйхирте
Ĕҫ йĕркийĕ.
Болђшевикла пĕрремĕш
Ҫуракийĕ.

Ех, уйхирĕм, ҫĕн уйхир!
Пит илемлĕ.
Кунта ирех бригадир
Вут хĕлхемлĕ.

Ҫĕнĕ чыслăн шăранаť
Еҫри йурă.
Хаљ курайман йăрана,
Ҫук вăл урăх.

Шупка пĕлĕтлĕ тӳпе
Пит хаваслă.
Кунта епир кĕтӳпе,
Хирĕ аслă.

Ҫĕнĕ йурă шăранаť,
Уйхир тăрăх.
Ретĕн-ретĕн сапăнаť
Суртлă вăрлăх.

## Канмали кунсенче.

Ех, уçă-çке кăмăл!
Хурçă йĕлтĕрпе
Йарăнмашкăн çăмăл —
Епир ертелпе.

Нуккă пĕр йарăнар
Çутă пăр çинче!
Амăртса ыткăнар,
Кайар-ха, инçе.

Ну, атăр-ха пĕре
Пурте йарăнар!
Ыран вĕренӳре
Ларма уçăлар.

Пăх, ыткăнчĕ ушкăн
Çутă пăр çинче.
Пĕлмеç ывăнмашкăн,
Кайаççĕ инçе.

Канмали кун иртет
Çамрăкшăн хавас.
Акă вăхăт çитет,
Киле саланаç.

## Тупмали.


| | |
|---|---|
| Леон. Пушкай | 9 |
| Ив. Вашки | 37 |
| Ал. Каттай | 59 |
| Ив. Малгай | 75 |
| Хв. Çитта | 81 |

Хакĕ 75 пус
Цена 75 коп.

Коллектив авторов

# ПЕРВЫЙ ПОДАРОК

Сборник стихов

Чувашиздат • 1933 • Чебоксары